27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ИЮЛЬ
16
ВЫРСАРНИКУН
140(6635) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Физкультурӑпа спорт ӗҫӗнчи ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемшӗн

Паян пирӗн ҫӗршыв физкультурникӗсен Пӗтӗм Союзри кунне паллӑ тӑвать. Физкультурникӗсем хӑйсен кунне кӑҫал Хӗрлӗ Ҫар геройла наступлени туса пынӑ вӑхӑтра уявласа ирттерессӗ. Ҫӗршыври нумай пин физкультурник, Хӗрлӗ Ҫар воинӗсен ретӗнче тӑрса, тӑшмана пӗтерсе тӑкас ӗҫре паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартассӗ, тылра та вӗсем, фабрикӑсемпе заводсенче, колхозсенче фронт валли ытлӑн-ҫитлӗн продукци туса кӑларас тесе, вӑйхалӑхне хӗрхенмесӗр ӗҫлессӗ.

Вӑрҫӑчченхи ҫулсенче комсомол, спорт тата профсоюз организацийӗсем ҫамрӑксене физически воспитани парас ӗҫе ҫирӗп туса пыни ахаль пулмарӗ. Ӗҫпе кӗрешӳре пиҫӗхнӗ совет физкультурникӗсем Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ тӗрӗслевне ӑнӑҫлӑ тӳсе ирттерме пултарчӗҫ.

Ҫапӑҫу фронтӗнче паттӑрлӑхпа хӑюлӑх кӑтартнӑ пиншер физкультурник ӗнтӗ Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Вӑл шутра пирӗн республикӑри физкультурӑпа спорт обществисенче ӳсе ҫитӗннӗ спортсменсем те сахал мар. Вӑрҫӑччен физкультура преподавателӗ пулса ӗҫленӗ паллӑ спортсмена О. Филиппов юлташа ҫапӑҫура хӑюлӑх кӑтартнӑшӑн правительство Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе тата Отечественнӑй вӑрҫӑн 1-мӗш степенлӗ орденӗпе наградӑланӑ. Ҫавӑн пекех нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫса, Солдатченко, Журавлев, Прокофьев тата ытти чылай юлташсем-физкультурниксем Совет правительствин чыслӑ наградисене илчӗҫ.

Вӑрҫӑ Хӗрлӗ Ҫар валли ҫирӗп те вӑйлӑ, тӳсӗмлӗ воинсем хатӗрлес ӗҫре спортпа физкультура питех те пысӑк вырӑн йышӑннине кӑтартса пачӗ. Физкультурӑпа спорт организацийӗсен тӗп задачи — фронт валли ҫирӗп ӳт-пӳллӗ, хӑюллӑ та паттӑр ҫынсем вӗрентсе хатӗрлесси пулса тӑрать. Республикӑри комсомол, спорт тата профсоюз организацийӗсем пӗтӗм спортпа физкультура ӗҫне ҫак тӗп тӗллеве пӑхӑнтарса организацилеме тивӗҫлӗ.

Паянхи кун пирӗн Ленин орденлӗ Чӑваш республикинче физкультурӑпа спорт коллективӗсем — 550 шутланаҫҫӗ. Вӗсем 28.039 физкультурнике пӗтӗҫтерсе тӑраҫҫӗ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче республикӑра ҫӗнӗрен икӗ спорт обществи организациленӗ. Вӗсем — «Смена» тата «Трудовые резервы» обществисем, вӗсем хӑйсен ретӗнче чылай шкулсемпе училищӗсенче вӗренекен ҫамрӑксене пӗтӗҫтерсе тӑраҫҫӗ. Ку обществӑсем ҫурлӑ комсомолӑн тата профсоюзӑн вырӑнти организацийӗсем шкулсемпе училищӗсенче оборонӑллӑ физкультурӑпа спорт ӗҫне аннӑн сарса яма пултарчӗҫ.

Пирӗн колхозсенче те спортпа физкультура ӗҫӗ анлӑн сарӑлса пырать. Колхоз ҫамрӑкӗсем физкультурӑпа спортӑн массӑллӑ мероприятийӗсене активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Колхозсенче халӗ физкультурӑпа спорт коллективӗсем 130 шутланаҫҫӗ, вӗсенче 3.625 физкультурник Хӗрлӗ Ҫар ретне тӑма тимлӗн хатӗрленеҫҫӗ. Колхоз ҫамрӑкӗсен иртнӗ хӗлле заочнӑй йӗркепе пулса иртнӗ йӗлтӗрпе ӑмӑртӑвӗ пирӗн колхозсенчи физкультурниксем хӑйсен ӗҫӗнче чылай пысӑк ҫитӗнӳсем тунине кӑтартса пачӗ. Ӑмӑртӑва нумай пин ҫамрӑк хутшӑнчӗ, вӗсенчен нумайӑшӗсем оборонӑллӑ спорта ҫирӗп хӑнӑхса пынине кӑтартрӗҫ. Етӗрне районӗнчи «17-мӗш партсъезд» колхоз ҫамрӑкӗсен спорт коллективӗ ӑмӑртура чи мала тухрӗ. Коллектив грамота тата хаклӑ парнесем илме тивӗҫлӗ пулчӗ.

Иртнӗ 1943 ҫулта пирӗн республикӑри физкультурниксемпе ҫамрӑксем профсоюзпа комсомол организацилене йӗлтӗрлӗ кроса йышлӑн хутшӑнчӗҫ те паха результатсем кӑтартса пачӗҫ. СССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи физкультурӑпа спорт ӗҫӗсен Пӗтӗм Союзри Комитечӗ Чӑваш республикине физкультурӑпа спорт ӗҫне лайӑх йӗркеленӗшӗн хӑйӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне пачӗ. Ҫав ялава пирӗн республикӑри физкультурниксем 1944 ҫулта та хӑйсенчех хӑварчӗҫ. Кӑҫал пулса иртнӗ хӗллехи кроса татах та йышлӑнрах хутшӑнса, вӗсем татах та пахарах результатсем кӑтартрӗҫ. Хӗллехи йӗлтӗрлӗ кроса мӗн пурӗ 127.760 ҫамрӑк хутшӑннӑ, вӗсенчен 115.730 ҫын дистанцие вӑхӑтра чупса тухнӑ.

Кӑҫал пирӗн физкультурӑпа спорт организацийӗсем ГТО значкисчӗсене вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе правительство панӑ задание ирттерсе тултарчӗҫ. Ҫавӑн пекех обществӑллӑ инструкторсем вӗрентсе хатӗрлес ӗҫе те ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланӑ. Йӗлтӗрпе ярӑнма вӗрентекен инструкторсем пулма 392 ҫын вӗрентсе кӑларнӑ. Штык вӗҫҫӗн ҫапӑҫма пирӗн спортпа физкультура организацийӗсенче кӑҫал планран ирттерсе 1.155 ҫамрӑка вӗрентсе кӑларнӑ.

Республикӑра оборонӑллӑ физкультурӑпа спорт ӗҫӗ ӳсе пынипе пӗрлех, ҫак ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине те паллӑ тумалла. Хӑшпӗр ҫӗрте физкультурниксемпе спортсменсен малалла ҫитӗнӳсем тӑвас туртӑмӗ ҫине ҫиелтен пӑхаҫҫӗ. Вӗсене спорт вӗренӗвӗн ӗҫне куллен туса пыма чӑрмантараҫҫӗ. Йӗпреҫ поселок совечӗн «ӗҫлӗ ҫынсем» 1943 ҫулта райцентрти стадиона пухаласа ҫӗрулми лартнӑ. Кӑҫал та ҫавӑн пекех. Ҫӗмӗрлери пӗр завод комитечӗн председателӗ стадионӑн картине сӳтсе вутӑ тутарттарнӑ, стадиона ҫапӑхтарса янӑ. Заводри ҫамрӑксемпе физически воспитани парас ыйтӑва кунта оборонӑллӑ ӗҫ вырӑнне хумаҫҫӗ. Шупашкарта, республикӑн тӗп хулинче, физкультурниксемпе спортсменсен йышӗ тӑтӑшах ӳсе пырать. Ҫакна шута илсе, ВКП(б) хула организацийӗн активӗ Атӑл ҫинче кӑҫал шыв спорчӗн станцине лартма решени йышӑнчӗ. Станцине тума физкультурӑпа спорт ӗҫӗн Шупашкар хула комитетне вӑхӑт кӑтартса пачӗ. Вӑхӑт иртсе пырать, анчах станцине тума халӗ те тытӑнман.

Паян республикӑн хулисемпе ялӗсенче физкультурниксем хӑйсен ҫитӗнӗвӗсемпе пуҫтарулӑхне пӑхса тухаҫҫӗ. Физкультурӑпа спорт обществисен ӗҫне татах ытларах вӑйлатма ҫӗнӗ ӗҫсем палӑртаҫҫӗ. Физкультурниксен ретне ҫӗнӗрен пиншер ҫамрӑка хутшӑнтарар, ҫӗнтерӳллӗ паттӑр Хӗрлӗ Ҫар валли ҫирӗп ӳт-пӳллӗ резерв ӳстерсе пырар!

Совет Информаци Бюровӗнчен

ИЮЛӖН 14-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Июлӗн 14-мӗшӗнче ИДРИЦА хулинчен сурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла тытса илнӗ, ҫав шутра — БУРЦЕВО, ЗУЕВО, ПОРЯДИНО, ЛИПУНЫ, ГНИДИНО, ГУЖЕВО ятлӑ пысӑк ялсем тата СПОЧКА чугун ҫул станцийӗ. Пирӗн ҫарсем ОПОЧКА хулине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та урамсенче ҫапӑҫма пуҫланӑ.

ПОЛОЦК хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 20 пункта ытла тытса илнӗ, ҫав шутра — МАЗАЛЕВЩИНА, ЗАЙЦЕВО, ПУЩАВЬЕ, КОХАНОВИЧИ, СТРИЖИНО ятлӑ пысӑк ялсем.

СВЕНЦЯНЫ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 70 пункта ытла тытса илнӗ, ҫав шутра — УЖПАЛЯЙ, ВИЖУНЫ, ДОБЕЙКИ, КЛИВЯНЫ, ВУЦИШКИ, ЗЫБАЛЫ, ШИРВИНТЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата СТОБУЛУНКИ, ТРУМБАТИШКИС, РУБИКЯЙ чугун ҫул станцийӗсем.

ВИЛЬНЮС хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 60 пункта ытла тытса илнӗ, ҫав шутра — МУСНИКИ, КЕРНОВО, ЖОСЛИ, ОЛАВА, ПРЕЛАЙ, РОНДОМАНЦИ, ПОРЕЧЬЕ ятлӑ пысӑк ялсем тата САНОЗО, ДРУСКЕНИКИ, РЫБНИЦА чугун ҫул станцийӗсем.

ЛИДА хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, наступлени туса пырса, Белосток облаҫӗнчи район центрне СКИДЕЛЬ хулине тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 50 пункта ытла йышӑннӑ, ҫав шутра — ЕЗЕРЫ, ВЕРЦЕЛИШКИ, ГУШИЦЕ, НОВШОВО, ЛУННА, ДУБНО, РОССЬ ятлӑ пысӑк ялсем тата ЕЗЕРЫ, ЖИДОМЛЯ, СКИДЕЛЬ, ЧЕРЛЕНА, РОССЬ чугун ҫул станцийӗсем.

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем июлӗн 14-мӗшӗнче ВОЛКОВЫСК хулипе пысӑк чугун ҫул узелне тытса илнӗ. Пирӗн чаҫсене нимӗҫсен 45-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ ЭНГЕЛЬ генерал-майор тыткӑна параннӑ.

СЛОНИМ хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 70 пункта ытла тытса илнӗ, ҫав шутра — ДРОГИЧАНЫ, РУДЗЕВИЧЕ, ПОДОРОСК, ЛАВРЫНОВИЧИ, ТРУХОНОВИЧИ, НОВОСЕЛКИ, СТРЫХИН ятлӑ пысӑк ялсем тата БРОННА ГОРА чугун ҫул станцийӗ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем ЯСЕЛЬДА шывӗпе ПРИПЯТЬ шывӗ урлӑ каҫнӑ та июлӗн 14-мӗшӗнче, ДНЕПР ҫинчи ҫар флотилийӗ пулӑшнипе, Совет Белоруссин область центрне ПИНСК хулине штурмласа тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата МАСЕВИЧИ, ПОДБЛОЦЕ, ИВАНИКИ, КУПЯТЫНИ, ГАЛЕВО ятлӑ пысӑк ялсене йышӑннӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

Июлӗн 13-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗн пур фронтсенче нимӗҫсен 38 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 21 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Идрица хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем ҫапла наступлени туса пынӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн Островпа Опочка хушшинчи шоссе ҫулӗ ҫине тухнӑ. Опочка хули патне пымалли вырӑнсенче нимӗҫсем бетонран нумай вӑхӑта пыракан укрепленисем тунӑ. Вӗсем оборонӑн ҫав рубежне ҫулталӑк хушши тунӑ, юлашки вӑхӑтра ӑна ҫӗре танксем чавса лартса вӑйлӑлатнӑ. Совет боецӗсем тӑшман оборонине пӗр чарӑнса тӑмасӑр татнӑ та Опочка хулине ҫурҫӗр енчен вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Пирӗн ытти чаҫсем тӑшмана хӗвелтухӑҫ енчен пырса ҫапнӑ, Опочка чугун ҫул станцине тытса илнӗ. Пирӗн чаҫсем ҫавӑн пекех тата Опочка хулин кӑнтӑр енне пырса кӗнӗ те урамсенче ҫапӑҫма пуҫланӑ. Тепӗр районра пирӗн ҫарсем нимӗҫсен пӗр полкне хупӑрласа илнӗ те ӑна хаяррӑн ҫапӑҫса аркатса тӑкнӑ. Вилнисем хушшинче нимӗҫсен 368-мӗш полкӗн командирӗн Мюллер подполковникӑн виллине тупнӑ. Тӑшман пите пысӑк сухатусем тӳсет. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, нимӗҫсен 2.500 салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, 820 ҫынна тыткӑна илнӗ. Нимӗҫсенчен 24 тупӑ, 180 пулемет ытла, 17.000 снаряд, 600.000 винтовка патронӗсем тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ.

* * *

Свенцяны хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, халӑх пурӑнакан 70 пункта ытла тытса илнӗ. Пӗр участокра нимӗҫсем хӑйсен ҫапӑҫура пулман вӑйӗсене илсе пырса тӑратнӑ та 9 хутчен пите хаяррӑн контратака тунӑ. Совет артиллерисчӗсемпе пехотинецӗсем тӑшманӑн пур контратакисене те сирсе янӑ. Пирӗн позицисем патӗнче тӑшманӑн 800 вилли тӑран выртса юлнӑ. Нимӗҫсен 6 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑшне ҫунтарса янӑ. 9 тупӑ, 17 миномет тата 30 пулемет тытса илнӗ.

* * *

Вильнюс хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чаҫӗсем, малалла куҫса пырса, нимӗҫсен 16-мӗш авиадесант полкӗпе 221-мӗш хурал дивизийӗн штабӗсене аркатса тӑкнӑ. Ҫар пурлӑхӗ тиенӗ эшелон тата апат-ҫимӗҫпе медикаментсен склачӗсене тытса илнӗ. Евье хулинчен хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫсем сывлӑшран пысӑк десант антарнӑ. Совет отрячӗсем тӑшман парашутисчӗсене ҫийӗнчех атакӑланӑ та пӗтерсе тӑкнӑ. Пумай ҫынна тыткӑна илнӗ.

* * *

Белоруссири 3-мӗш фронтӑн Вильнюс хулинче тытса илнӗ ҫарӗсем ӗнерхи оперативнӑй сводкӑра кӑтартнӑ трофейӑсемсӗр пуҫне тата ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: пулеметсем—300, винтовкӑсемпе автоматсем—7.000, мотоциклсем—100, лашасем—500, боеприпас склачӗсем—56, ҫар пурлӑхӗпе апат-ҫимӗҫ склачӗсем—97, тӗрлӗ грузсем тиенӗ чугун ҫул эшелонӗсем—6, ҫавӑн пекех тата ҫар пурлӑхӗ нумай тытса илнӗ.

* * *

Лида хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем Скидель хулине тытса илнӗ. Ӑнӑҫӑва малалла аталантарса пырса, вӗсем анлӑ фронтпа Неман шывӗ патне пырса тухнӑ. Совет боецӗсем пӗр чарӑнса тӑмасӑр ҫав шыв урлӑ каҫнӑ та хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн ахаль ҫулсен узелне Лунна ялне, Неман шывӗн хӗвеланӑҫ хӗррине ларакансене, тытса илнӗ.

* * *

Пирӗн ҫарсене нимӗҫсен 45-мӗш дивизийӗн командирӗ Энгель генерал-майор тыткӑна параннӑ. Ҫапла вара, пирӗн ҫарсем июнӗн 23-мӗшӗнче наступлени пуҫласа янӑранпа нимӗҫсен 20 генералне тыткӑна илнӗ.

* * *

Белоруссири 1-мӗш фронт ҫарӗсем, Днепр ҫинчи ҫар флотилийӗ пулӑшнипе, Пинск хулине штурмласа тытса илнӗ. Ҫӗрле ҫав флотилин карапӗсем Пинск хулин кӑнтӑр хӗррине десант антарнӑ. Пирӗн десантникӗсем тӑшман гарнизонӗпе урамсенче ҫапӑҫма пуҫланӑ. Ҫав вӑхӑтра совет ҫарӗсем Ясельда шывӗпе Припять шывӗ урлӑ каҫнӑ та хулана икӗ енчен кӗрсе кайнӑ. Паян ирхине пирӗн ҫарсем нимӗҫсен гарнизонне пӗтӗмпех пӗтерсе тӑкнӑ. Пинск хулине фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен пӗтӗмӗшпех ирӗке кӑларнӑ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ тата нумай ҫынна тыткӑна илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн летчикӗсем Балтика тинӗсӗнче нимӗҫсен икӗ транспортне шыва путарнӑ. 8.000 тонна таякан пӗр транспортне пирӗн летчик Шишков лейтенант тата штурман Баранов лейтенант торпедӑласа шыва путарнӑ. Тӑшманӑн 6.000 тонна таякан тепӗр транспортне летчик Девяткин кӗҫӗн-лейтенант тата штурман Базаров лейтенант путарнӑ.

* * *

Львов облаҫӗнчи партизансен отрячӗсем ушкӑнӗ ҫак кунсенче нимӗҫсен карательнӑй экспедицийӗпе пите хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Совет патриочӗсем гитлеровецсене сывӑхах янӑ та вӗсене пур йышши хӗҫпӑшалсемпе те пеме пуҫланӑ. Тӑшман атакине сирсе янӑ. Нимӗҫсем тата виҫӗ хутчен умлӑн-хыҫлӑн атакӑланӑ. Анчах та вӗсен ӗҫӗ ӑнман. Тӑшманӑн ҫав ҫапӑҫура 300 салтакӗпе офицерӗ ытла вилнӗ е аманнӑ.

Нимӗҫ генералӗ Мюллер парӑнма хушса панӑ приказ

Тӑшманӑн хупӑрласа илнӗ группировкин юлашкийӗсем Совет командованийӗн ультиматумне йышӑннӑ

Июль уйӑхӗн пуҫламӗшӗнче пирӗн ҫарсем, ҫавӑрса илмелли маневр туса илсе, Минск хулинчен хӗвелтухӑҫнерехре фашистла нимӗҫ ҫарӗсен группировкине хупӑрласа илнӗ. Тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ чухне Совет командованийӗ тӑшманӑн хупӑрласа илнӗ офицерӗсемпе салтакӗсене, халех парӑнма хушса, ультиматум панӑ. Нимӗҫсен 12-мӗш армейски корпусӗн командирӗ Мюллер генерал-лейтенант, нимӗҫсен 4-мӗш армийӗн командующийӗн ӗҫӗсене туса тӑнӑскер, июлӗн 8-мӗшӗнче Совет командованийӗн ультиматумне йышӑннӑ та нимӗҫ ҫарӗсене ҫакӑн пек приказ панӑ (нимӗҫ чӗлхинчен куҫарнӑ):

Птичь шывӗнчен хӗвелтухӑҫнерехре хупӑрласа илнӗ нимӗҫ ҫарӗсене Мюллер генерал-лейтенант панӑ приказ

8. 7. 1944 ҫ.

4-мӗш армийӗн Птичь шывӗнчен хӗвелтухӑҫнерехре тӑракан салтакӗсене!

Пӗр эрне хушши пынӑ йывӑр ҫапӑҫусем хыҫҫӑн тата вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳренӗ хыҫҫӑн пирӗн лару-тӑру вӗсне ҫитичченех начарланчӗ. Эпир хамӑр тивӗҫе пурнӑҫларӑмӑр. Пирӗн ҫапӑҫас вӑй йӑлтах чакса ҫитрӗ, пире кирлӗ хатӗрсем ярса парӗҫ тесе шанма ҫук. Верховнӑй командовани пӗлтернӗ тӑрӑх, вырӑссем Барановичи хули патӗнче тӑраҫҫӗ. Сывӑхри юханшыв урлӑ каҫса каялла чакмалли ҫулсене татнӑ. Хамӑр вӑйпа ҫакӑнтан ҫӑлӑнса тухма нимӗнле шанчӑк та ҫук. Пирӗн соединенисем пӗр йӗркесӗр саланса пӗтнӗ. Аманнисене ҫав тери нумай ҫынна пӗр пулӑшусӑрах пӑрахса хӑварнӑ.

Вырӑссен командованийӗ ҫапла тума сӑмах пачӗ:

а) аманнисене медицина енӗпе пулӑшма;

б) офицерсен хӗҫ йышши хӗҫпӑшалӗсене тата салтаксен орденӗсене хӑйсем ҫумӗнчех хӑварма сӑмах пачӗ.

Пире ҫапла тума хушрӗҫ:

в) мӗнпур хӗҫпӑшалсемпе хатӗрсене сухмалла та пӗр пӑсмасӑр памалла;

г) хирӗҫ тӑма чарӑнмалла.

Эпӗ ҫапла хушатӑп:

Халех ҫапӑҫма пӑрахмалла. Вырӑнти ушкӑнсен, офицерсем е старши унтер-офицерсем ертсе пынипе, ҫӗршерӗн—пилӗкҫӗршерӗн пухӑнмалла. Аманнисене пуҫтарса илсе, хӑварпа пӗрле илсе пымалла. Пирӗн дисциплинӑллӑ та йӗркеллӗ пулмалла, ҫак ӗҫсене май килнӗ таран хӑвӑртрах туса ирттермелле.

Ҫак приказа ҫырса илсе, сӑмахпа каласа тата ытти пур майсемпе те малалла сарӑр.

МЮЛЛЕР генерал-лейтенант
12-мӗш армейски корпусӑн командирӗ.

Мюллер генерал-лейтенантӑн ҫак приказне хупӑрласа илнӗ ҫарсен мӗнпур ушкӑнӗсене салатса панӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсем хирӗҫ тӑма чарӑннӑ та, хӗҫпӑшалсене пӑрахса, тыткӑна параннӑ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

М. П. Чеховӑна Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑлаcси ҫинчен

Вырӑссен аслӑ писателӗн А. П. Чеховӑн литература наследствине сыхласа усрас, тӗпчесе пӗлсе тата пичетлесе кӑларас тӗлӗшпе 40 ҫул хушши ӑнӑҫлӑн ӗҫленӗшӗн Мария Павловна Чеховӑна Ӗҫлӗх Хӗрлӗ Ялав орденӗпе наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи июлӗн 14-мӗшӗ.

СССР Совнаркомӗнче

А. П. Чехов вилни 40 ҫул тултарнӑ май унӑн ятне ӗмӗр асра тытмалла тума кирлӗ ӗҫсем ҫинчен

Вырӑссен аслӑ писателӗ Антон Павлович **Чехов** вилни 40 ҫул ҫитнӗ май СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ **ҫапла йышӑннӑ:**

1. Мускавпа Таганрог хулисенче А. П. Чеховӑн памятникӗсене лартас.
2. Мускаври Малая Дмитровка урамне Чехов урамӗ тесе ят парас.
3. Мускавра А. П. Чеховӑн государство музейне тӑвас.
4. Мускав облаҫӗнчи Мелихово ялӗнче А. П. Чеховӑн бронзӑран тунӑ бюстне лартас.
5. А. П. Чеховӑн мӗнпур сочиненийӗсен пуххине пичетлесе кӑларас.
6. Ҫаксене А. П. Чехов ятне парас:
 а) Таганроги драма театрне;
 б) Мускав облаҫӗнчи Звенигород хулинчи район больницине;
 в) Мускав облаҫӗнчи Истра хулинчи вӑтам шкула;
 г) Сахалин ҫинчи Александровск хулинчи 17-мӗш номерлӗ вӑтам шкула.
7. А. П. Чехов пурӑннӑ ҫуртсем ҫине мемориальнӑй хӑмасем ҫапса хурас.
8. Ҫак шкулсенче А. П. Чехов ячӗпе стипендисем памалла тӑвас:
 а) Мускаври М. В. Ломоносов ячӗпе тӑракан Ленин орденлӗ государство университетӗнче — филологи факультетӗнче вӗренекен студентсем валли уйӑхне 400-шер тенкӗ парса тӑмалли 5 стипенди тата вырӑс литератури кафедрин аспирантчӗсем валли уйӑхне 800-шер тенкӗ парса тӑмалли пӗр стипенди;
 б) Ленинградри Ленин орденлӗ университетра — филологи факультетӗнче вӗренекен студентсем валли уйӑхне 400-шер тенкӗ парса тӑмалли 3 стипенди тата вырӑс литератури кафедрин аспирантчӗсем валли уйӑхне 800-шер тенкӗ парса тӑмалли пӗр стипенди;
 в) Вл. Ив. Немирович-Данченко ячӗпе тӑракан шкулта-студире — унта вӗренекенсем валли уйӑхне 400-шер тенкӗ парса тӑмалли 5 стипенди;
 г) Таганроги учитель институтӗнче—чӗлхепе литература факультетӗнче вӗренекен студентсем валли уйӑхне 350-шар тенкӗ парса тӑмалли 3 стипенди;
 д) Сахалин ҫинчи Александровскри педагогика училищинче — унта вӗренекенсем валли уйӑхне 300-шер тенкӗ парса тӑмалли 2 стипенди.

Паян „Сталинец“ обществин стадионӗнче

Паян, июлӗн 16-мӗшӗнче, Шупашкарти «Сталинец» спорт обществин стадионӗнче хулари физкультурниксемпе ҫамрӑксен парачӗ пулать. Парад кӑнтӑрла 12 сехетре пуҫланать. Парад хыҫҫӑн митинг пулать.

Ҫаксем хыҫҫӑн стадионра тӗрлӗ физкультура мероприятийӗсем, спортсменсен ӑмӑртӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ.

Юлашкинчен футбол вӑййи пулать. Стадион хуҫи — «Сталинец» команди Горькинчен килнӗ «Крылья Советов» командӑпа тӗл пулать.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи хисеплӗ ӗҫ

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ физкультура организацийӗсемпе спорт мастерӗсем умне виҫӗ тӗп задача кӑларса тӑратрӗ: физкультура организацийӗсен пӗтӗм ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек организацилемелле, Хӗрлӗ Ҫар валли ҫирӗп те ӳсӗмлӗ боецсем вӗрентсе хатӗрлемелле тата спорт результачӗсене тӑрӑшсах ӳстерсе пымалла.

Фронт ыйтнине ӑнланса, эпӗ ҫак иртнӗ ҫулсене ахаль ирттермерӗм.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче эпӗ 30 сехетлӗ программа тӑрӑх 3500 ҫынна ытла йӗлтӗрпе ярӑнма, 25 сехетлӗ программа тӑрӑх 2.000 ҫынна ытла штык вӗҫҫӗн ҫапӑҫма, 1.500 ҫынна шывра ишме вӗрентрӗм, пин ҫамрӑка ытла ГТО нормисене пама вӗрентсе хатӗрлерӗм.

Ҫакӑнпа пӗрлех, эпӗ куллен тренировкӑсем тӑватӑп, хамӑн ҫитӗнӳсене ӳстерсе пыма тӑрӑшатӑп. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи кашни ҫулах ВЦСПС организациленӗ Пӗтӗм Союзри ӑмӑртусене хутшӑнса, тивӗҫлӗ вырӑн йышӑнса пытӑм.

М. ГУЩИНА,
СССР спорт мастерӗ.

ОТЕЧЕСТВЕННӐЙ ВӐРҪӐ ПАТТӐРӖСЕМ

ҪАПӐҪУРИ ҪАР. Гварди рядовойӗ И. В. Салмин чаҫри чи паллӑ разведчиксенчен пӗри шутланать. Разведкӑра ҫӳренӗ чухне вӑл нимӗҫсен пилӗк салтакне тыткӑна илнӗ ӗнтӗ. Тӑшманпа хӑюллӑ та паттӑр ҫапӑҫнӑшӑн Салмин юлташа 3-мӗш степень Мухтав орденӗпе тата «Хастарлӑхшӑн» медальпе наградӑланӑ. Унсӑр пуҫне, ӑна кӑкӑр ҫине ҫакмалли «Чаплӑ разведчик» текен паллӑ панӑ. **Укерчӗк ҫинче: пирӗн земляк, гвардеец Василий Иванович Салмин.** Вӑл Шӑмӑршӑ районӗнчи Улмалӑх ялӗнчи «Заря свободы» колхозран.

А. ФРИДЛЯНСКИЙ фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Малта пыракан цех

Челноков главнӑй инженер пулса ӗҫлекен заводра рабочисемпе инженерла-техникла работникӗсен тата служащисен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху заводри цех коллективӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн июнь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухрӗ.

Завод июньри плана 105 процент тултарнӑ. Цехсен ӑмӑртӑвӗнче Лебедев юлташ начальник пулса ӗҫлекен цех мала тухнӑ. Вӑл цеха заводри куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялава тата рабочисене премилеме 5.000 тенкӗ укҫа панӑ. Унсӑр пуҫне, цех начальникне Лебедева тата технолога Бубис юлташа уйӑхри ӗҫукҫипе премиленӗ.

Батурина юлташ ертсе пыракан цех та лайӑх ӗҫленӗ. Ҫав цехри стахановецсем Еслюкова, Яшмейкина, Краснова, Сергеева юлташсем уйӑхри плана 350 процент ытла тултарнӑ.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Тӑрмӑш вулав ҫурчӗ — культурӑллӑ ҫурт

Вулав ҫурчӗ ялта — культура вучахӗ. Сталин юлташӑн приказӗсене ӗҫҫынниcене вӑхӑтра ӑнлантарса парасси, фронтри ӗҫсем ҫинчен вӑхӑтра пӗлтерсе тӑрасси, совет хресченӗсене пирӗн тӑван ҫӗршыва вӗҫӗмсӗр юратма, тӑшмана пӗтӗм чӗререн курайммасӑр пурӑнма вӗрентесси, — ҫаксем ӗнтӗ ялсенче шӑпах вулав ҫурчӗсемпе клубсем урлӑ пулса иртмелле.

Ҫакна Тӑвай районӗнчи Тӑрмӑш вулав ҫурчӗн заведующийӗ Белков юлташ тӗрӗс ӑнланнӑ. Вӑл вулав ҫурчӗн ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек йӗркеленӗ. Вулав ҫурчӗ илемлӗ те таса. Стенисене плакатсемпе лозунгсем, картинӑсемпе картӑсем илемлетсе тӑраҫҫӗ. Библиотекӑра 3000 кӗнеке ытла. Ҫичӗ йышши хаҫат-журнал килсе тӑрать. Кунтах шахмӑтсем, доминосем, биллиард тата музыка инструменчӗсем чылай. Вӑтамран илсен, вулав ҫуртне кунсерен 27 ҫынран кая мар ҫӳреҫҫӗ. Клубра агротехника, ҫар ӗҫне вӗренмелли, драма, хор кружокӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Драмкружок 13 хутчен постановка лартса 3.313 тенкӗ укҫа пухнӑ. Ҫав укҫана вӗсем фронтовиксен семьисене пулӑшма ҫӗре панӑ.

Кунта 13 ҫынран вулав ҫурчӗн совечӗ, 7 ҫынран клуб совечӗ уйӑрнӑ. Вӗсем план тӑрӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вулав ҫуртӗнче справкӑсем паракан сӗтел тунӑ. Халиччен 83 ҫын вулав ҫуртӗнче тӗрлӗ ыйтусемпе каласса ответ илнӗ. Вӗсем пуринчен ытларах вӑрҫӑ тата ялхуҫалӑх ыйтӑвӗсемпе интересленнӗ.

Вулав ҫурчӗ ялти активпа, комсомолецсемпе шкул ачисене ӗҫе явӑҫтарать. Вулав ҫурчӗпе клуб ҫумӗнчи актив 125 ҫынран тӑрать. Агитколлективра 13 ҫын. Вӗсем кӑҫал вулав ҫуртӗнче ӗҫҫыннисене 7 хутчен тӗнчери лару-тӑру ҫинчен, 6 хутчен партипе правительствӑн постановленийӗсене ӑнлантарса панӑ. Ҫав каласусенче 8.916 ҫын пулнӑ.

Халӗ тырӑ вырас хӗрӳллӗ вӑхӑт ҫывхарса килет. Вулав ҫурчӗ ҫак тапхӑрта ӗҫлеме лайӑх хатӗрленет. Халӗ 13 культпалатка, хаҫат витринисемпе кӑтарту хӑмисем тата Хисеп хӑмисем тунӑ.

З. МИТРОФАНОВА.
(Хамӑр корр.).

Совет государстви ача амăшĕсемпе ачасемшĕн сталинла тăрăшать

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, нумай ачаллă тата пĕччен амăшĕсене государство енчен пулăшассине ÿстересси, ача амăшĕсен тата ачасен пурнăçне сыхлассине çирĕплетесси çинчен, «Ача амăшĕ-героиня» тесе хисеплĕ ят пани, «Ача амăшĕн мухтавĕ» орденĕ тата «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медаль тăвасси çинчен кăларнă Указ совет государстви ача амăшĕсене ачасемшĕн тăрăшнине кăтартакан чаплă документ пулса тăрать.

[illegible] Ачасем — пирĕн пуласлăх. Ача амăшĕсемпе ачасене сыхласси — совет государствин пархатарлă тивĕçĕ. [illegible] Çапла, 1936 çулхи [illegible] 1944 çулта [illegible] 56 миллион та 678 пин тенкĕ [illegible] 1944 çул пуçламăшĕнче [illegible] 7 ачаран пуçласа 10 ачана çити ÿстерекенсене, 2632 хĕрарăма, 11 ача тата ытларах ÿстерекенсене 16 хĕрарăма пособи панă. [illegible] 12 ача ÿстерет. Вăл кашни çул 8000 тенкĕ пособи илсе тăрать.

Ача амăшĕсене ачасен пурнăçне сыхласа [illegible]

[illegible]

Совет государстви ача амăшĕсемпе ачасене пулăшакан çĕнĕ Указа тулли кăмăлпа ырласçĕ [illegible]

В. ТАВРИН,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ.

Совет çыннисем ача амăшĕсемпе ачасене пулăшасси çинчен кăларакан çĕнĕ Указа тулли кăмăлпа ырласçĕ

ШУПАШКАР

[illegible] СССР Верховнăй Совет Президиумĕ ача амăшĕсемпе ачасене пулăшасси çинчен кăларнă Указа тулли кăмăлпа ырласа йышăнчĕç. [illegible]

[illegible] валли продукци ытларах туса кăларма сăмах пачĕç.

КУКЕС.

[illegible] латма палăртнă. Совет çыннисем ку Указа чĕререн ырлĕç.

РЕСПУБЛИКА УЙХИРĔСЕНЧЕ

Комбайнсем юсас ĕçри паха опыт

Красноармейски районри машинно-тракторнăй станци комбайнсен пайĕсене хĕллехи вăхăтрах хатĕрлеме тытăнчĕ. Кĕр-кунне пур комбайнсене те тĕсатса ларт-нă, моторсене кăларса ялănах хутса ăшăтакан пÿлĕмсене хунă. Комбайнсен йывăç пайĕсене пĕтĕмĕшпех хĕллехи вă-хăтра мастерскойăн столярнăй цехĕнче туса хатĕрленĕ, çапла вара вĕсем ку тарининче лайăх типсе тăнă. Йывăç-ран тунă пайсем чĕрĕ шулсан, вĕсем часах валаççĕ, шултăркаса каяççĕ. Çавăнпа та МТС ди-рекцийĕ тата ком-байнерсем ку тĕ-лĕшпе çине тăрса ĕçлеме кирлине шу-та илнĕ.

Хĕлле те, çур-кунне те комбай-нерсемпе вĕсен по-мощникĕсем яла-нах мастерскойра комбайнсене юсанă çĕрте ĕçленĕ, мотор-сене, молотилка ба-рабанĕсене тĕрĕслĕ-нĕ, вĕсен мĕнле пайсем çитменнине, мĕнле пайсене мĕн чухлĕ хатĕрлемеллине пăхса туха палăртнă. Çуркунне МТС директо-рĕ Константинов, старши механик Вино-градов юлташсем, комбайнерсемпе пĕрле, комбайнсене юсамалли пайсем мĕн чухлĕ çĕнĕрен тума кирлине шута илнĕ. Ун хыççăн комбайнсене юсама график туса хатĕрленĕ.

График тăрăх ĕçлесе пырса, Гаврилов, Антокова, Иванов, Белков комбайнерсем майăн 1-мĕшĕ тĕлне хăйсен комбайнĕсене юсаса пĕтерчĕ те ытти комбайнерсене пу-лăшнă. Кăçал кашни комбайнерта ком-байнер помощникĕ харпăрхăйĕн комбайнне юсанă, ĕçре пĕр-пĕрне ăмăртнă, ком-байнсене срокра юсаса пĕтерес тесе кун-не 14—15 сехет хушши пĕр таталмасăр ĕçленĕ. Çапла вара 12 комбайна июлĕн 6-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтернĕ; вĕсене го-сударство комиссийĕ пăхса тухса йы-шăннă.

МТС дирекцийĕ комбайнсене юсас ĕçе лайăх организациленĕ тата уйрăм пайсе-не вырăнтах туса хатĕрлени, киввисене урăхлатса çĕнетни ĕçĕн ăнăçлăхĕпе хă-вăртлăхне татса пачĕç. Комбайн моторĕ-сен уйрăм пайĕсене хĕллех тупса, МТС мастерскойĕнче çĕнетсе вырнаçтарнă. Мо-тор поршнĕсене токарь Илларионов юсанă. Иртнĕ çулта поршнĕсен тыткăчисене (поршневые пальцы) старши механик Виноградов юлташ лайăх çĕнетнĕччĕ. Кăçал та вĕсене иртнĕ çулхи пекех МТС-ăн мастерско-йĕнче хатĕрленĕ.

Красноармейски МТС директорĕ А. К. Константинов юлташ.

Комбайнсем вал-ли кăçал кивĕ пай-сене сахал мар çĕ-нетнĕ, чылай пайĕ-сене çĕнĕрен тунă. Уйрăмах илсен, ба-рабанăн шултăра шăлĕсене тата ба-рабан вырнаçнă станăн кĕске шăлĕ-сене тата ытти нумай пайсене мас-терскойрах çĕнетнĕ, çĕнĕрен тунă. Ку-семсĕр шуçне каш-ни комбайн моторне крассинпа ĕçлемелле тунă.

Комбайнсен каш-ни пайне тĕрĕс вырнаçтарса лартас, уйрăм пайсене çĕнетес, шлифовка тăвас тĕлĕшпе старши механик Виноградов, механиксем Кадыковпа Пав-лов юлташсем ремонтра ĕçлекен рабочи-сем хушшинче пĕрмаях калаçусем ирт-тернĕ, ремонт ĕçне ертсе пынă. Токарьсем Петров, Слесарев, Гурьев тата тимĕрçĕ Абрамов юлташсем хăйсене панă заказсе-не вăхăтра та лайăх пурнăçласа пынă.

Комбайнсене юсаса пĕтернĕ хыççăн комбайнерсем хăйсен машинисене тепĕр хут тĕрĕслерĕç, хăйсем тытса пыракан карапсемпе 200—250 гектартан кая мар тырă вырса пустарма сăмах пачĕç. Çап-ла, В. Гаврилов кăçал 250 гектар, Г. Ива-новпа Антокова 200-шер гектартан кая мар тырă вырма обязательство илчĕç.

Колхоз уйхирĕсенче ĕçленĕ вăхăтра комбайнерсене пулăшу парса тăма МТС-ăн механикĕсене — Кадыков, Виноградов тата Павлов юлташсене участоксем çумне çирĕплетнĕ.

С. ШАДИН.
(Хамăр хорр.)

Трактор бригади çулталăк планне тултарчĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, июлĕн 15-мĕшĕ. (Телефонпа). Комсомолецсемпе çамрăксен 7-мĕш трактор бригади çулталăк планне (тырăсене çапассисĕр пуçне) 113 процент тултарнă, 400 килограмм горючи перекетленĕ.

Бригадăра уйрăмах комсомолка Герасимова юлташ лайăх ĕçленĕ, вăл хăйĕн планне 139 процент тултарнă. Комсомолка-трактористка Соловьева юлташ та çулталăк планне 115 процент тултарса икĕмĕш вырăн йышăннă.

Пĕр вак-тĕвеке те манса хăвармаççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, июлĕн 14-мĕшĕ. (Телефонпа). Хурамалти Тельман ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Павлов юлташ) çĕртме сухи туса пĕтерчĕ.

194 гектар çинчи çуртлăхрисене 2-мĕш хут çумланă. Тырпулсене пухма кирлĕ машинăсене: 2 жнейкăпа пур молотилкăсене те пĕтĕмпех юсанă. Колхоз тимĕрçи М. Семенов машинăсем валли кирлĕ пайсене нумайĕшне хăех туса хатĕрленĕ. Халĕ тырă çулма çавасене туптаççĕ, çурласене шăлласçĕ. Çĕнĕрен 40 вĕрен, 50 тилхепе явса хатĕрленĕ. 27 урапа юсанă, 8 урапа çĕнĕрен туянна.

Кĕлте турттарнă çĕрте кирлĕ цулăкăр вĕрен-пăявсем, лаша кÿлмелли хатĕрсем те çителĕклĕ. Михĕсемпе шăналăксем хатĕрлеççĕ.

Колхоз тырпул пухма паян-ыранах тухма хатĕр. Халĕ колхозниксем итемсене тасатаççĕ, кĕлетсене дезинфекцилеççĕ.

С. РУМЯНЦЕВ.

Утă çулса пухас ĕçе вăраха яраççĕ

КАЛИНИНО. Шăнкассинчи «Броневик» колхоз, иртнĕ çул утă çулас ĕçе кирлĕ пек йĕркелейменнипе пула, чылай утта улăхрах çĕртсе ячĕ. Хĕлле вара выльăхсене çитерме апат шулмарĕ. Анчах та иртнĕ çулхи йăнăшсем колхоз руководителĕсене, уйрăмăнах унăн председательне Д. Андреев юлташа, нимĕ те вĕрентмерĕç. Колхоз кăçал та утă çулма кирлĕ пек хатĕрленмерĕ. Çавасене туптаман, лапаткасем, кĕреплесемпе сенĕксем те çителĕксĕр. Çавна пула утă çулас ĕç ытла та вăраха тăсăлать.

Вăл кăна мар, колхозра тырпулсене пухса кĕртме те хатĕрленмеççĕ. 2 жнейка юсавсăр лараççĕ, мĕн чухлĕ çурла-çава пуррине шутламан, çурласене шăллас пирки никам та нимĕн те тумасть. Çĕртме сухине те сухаласа пĕтермен.

Çак çитменлĕхсем вĕсем пĕтĕмпех колхоз председателĕ Андреев юлташ ответлăха туйса ĕçлейменнинчен килеççĕ.

Б. МАЛЬЦЕВ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Ла-Э-дю-Пюи пунктран кăнтăртарахра 10 миля сарлакĕш фронтра союзниксен çарĕсем малалла куçнă, Лессэ пунктĕнчен 2 мильăри тĕп çула пÿлсе лартнă. Сылтăм флангра Бреттвиль сывăхĕнче пирĕн çарсем 2.000 ярда яхăн малалла куçнă. Сулахай флангра Весли ялне атакăласа йышăннă. Карантан секторĕнче Тот шывĕн икĕ хĕррипех наступлени пырать. Пирĕн çарсем Трибеу ялĕн хĕррине çитнĕ тата Омме вăрманĕ урлă 2 миля кăнтăралла тата хĕвелтухăçнелле куçнă, Ле-Омме-Д'Артенэ сывăхĕнчи çул патне çитнĕ.

Июлĕн 13-мĕшĕнче çанталăк начар тăнă пирки союзниксен авиацийĕ вăйлах кĕрешеймен.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем Лессэпе Сен-Ло хушшинчи çул патнелле куçса пынă. Тăшман оборонине пысăках мар темиçе савăл çапса кĕртнĕ. Лессэрен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Лон местечкине тытса илнĕ. Союзниксен çарĕсем Лета Омме пунктĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри Трибеупа Ле-Шан-де-Лоск хушшинчи çула пÿлсе лартнă. Сен-Ло хулинчен çурçĕртерехре Вир шывĕн хĕвеланăç сыранĕнче çĕнĕрен малалла куçнă. Союзниксен çарĕсем Ле-Мениль-Дюран ялĕ хĕррине кĕнĕ, Фронтăн ытти участокĕсенче улшăнусем пулман.

Июлĕн 14-мĕшĕнче ирхине истребительбомбардировщиксем сивлăшри йывăр условисенче Мондидьери, Бобери, çавăн пекех тата Лизье-Берне районĕнчи транспорт объекчĕсене тапăннă. Нормандире тăракан самолетсем çĕр çинчи чаçсене пулăшса пынă тата Сен-Ло сывăхĕнчи тĕреклетнĕ пунктсене пырса тапăннă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен çарĕсем, тăшмана Ареццо, Поджибонси тата Ливорно патĕнчи вăйлă тĕреклетнĕ çÿллĕ вырăнсенчи позицисенчен хĕссе кăларас тесе, ăнăçлă атакăланă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕ йышăнса тăракан участокра Инди чаçĕсем Монте-Санта-Мария пунктне тата Монте-Чивителла ятлă паха çÿллĕ вырăна йышăннă. Американецсен 5-мĕш армийĕнчи француз чаçĕсем Сан-Джиминьянона тытса илнĕ, 3 километр ытла çурçĕрелле куçнă, çапла вĕсем Поджибонсине хĕвеланăç енчен пырса тытса илессипе хăратса тăраççĕ. Унтан хĕвеланăçнерехре американецсен чаçĕсем пĕтĕм фронт тăршшĕпех малалла куçнă, темиçе ялпа паха çÿллĕ вырăнсене тытса илнĕ, Терричолы хулине çавăрса илессипе хăратса тăраççĕ.

Енер союзниксен авиацийĕ тăшманăн Италири объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

Югославин çĕнĕ правительстви

ЛОНДОН, июлĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви лайăх пĕлекен çынсенчен илтнĕ тăрăх çапла пĕлтерет: доктор Иван Шибашич паян каçхине Югослави правительствине тунă. Правителство ултă министртан тăрать.

Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен движенирен (ăна маршал Тито ертсе пырать, çак правительствăна икĕ представитель кĕреççĕ: Белград университечĕн профессорĕ серб Сретен Вукосавлевич тата словенсен политика деятелĕ Драго Марушич, ĕлĕк министр тата словени банĕ (губернаторĕ) пулнăскер. Вĕсем халĕ Югославин ирĕке кăларнă территорийĕнчен правительство пурăнакан вырăна туха кайнă.

Çĕнĕ правительствăра Вукосавлевич снабжени министерствине, унтан çĕрĕç, руда тата вăрман министерствине ертсе пырать. Марушич юстиципе çулйĕрсен министрĕ пулать. Премьер-министр Шибашич ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе çар министрĕ пулса ĕçлет.

Словен университечĕн профессорĕ (вăлах словен католикĕсен партийĕн членĕ) Исидор Панкар çутĕç министрĕ пулать. Вăл Югославин Канадăри посланникĕ пулса ĕçленĕ, анчах та Пурич правительствин ĕçĕсене хирĕçлесе, отставкăна тухнă.

Правительствăна икĕ серб, икĕ хорват тата икĕ словен кĕреççĕ. Король Петр çĕнĕ кабинет туни çинчен калакан декрета алă пуснă.

«ИРĔКЛĔХ СОВЕЧĔ» ЧĔННИНЕ ПĔТĔМ ДАНИ ЫРЛАСА ЙЫШĂННĂ

ГЕТЕБОРГ, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Дани халăхĕ хăй çапăçура пĕтĕçнине тепĕр хут кăтартса панă. Нумаях пулмасть Данин «Ирĕклĕх совечĕ» мĕнпур датчансене июлĕн 12-мĕшĕнче кăнтăрла Копенгагенри пĕтĕмĕшле забастовка вăхăтĕнче гитлеровецсем вĕлернĕ датчансене 2 минута хушши пĕр чĕнмесĕр тăрса аса илме чĕннĕ. Пĕтĕм Дани çакна ырласа йышăннă. 12 сехет çитсен, рабочисем ĕçлеме пăрахнă, урамсенче çÿрессИ пĕтĕмпех чарăнса ларнă. Нимĕçсем хăратнине пăхмасăрах, датчансем çак ĕçе калама çук харăс та йĕркеллĕн туса ирттернĕ.

ФИНЛЯНДИ ВЛАÇĔСЕМ ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ПЕК «ТОТАЛЬНĂЙ МОБИЛИЗАЦИ» ТУСА ИРТТЕРЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Финсен хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, рабочисем çитменнине мĕнле те пулсан саплас тесе, Финлянди правительствин чрезвычайнăй мерăсем йышăнма тивет. Финсен «Хувудстадсбладет» хаçачĕ çырнă тăрăх, июлĕн 11-мĕшĕнче Хельсинки хулинче тĕрлĕ партисен тата хуçалăх, финанс, государство организацийĕсен представителĕсен конференцийĕ пулса иртнĕ. Рабочисене «тотальнăй йĕркепе мобилизацилесси çинчен» сÿтсе-явнă. Хаçат каланă тăрăх, конференци çакăн пек вывод тунă: çав мобилизацие туса ирттермешкĕн «хăйсен граждан тивĕçĕсене пурнăçлама килĕшмен тата рабочисене мобилизацилес ĕçе саботаж тăвакан çынсене правительствăн хытă айăпламалла», тенĕ.

«Хельсингин саномат» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хуçалăхăн тĕрлĕ отраслĕсенче рабочисен пĕтсе çитнĕ резервĕсене тултармашкăн влаçсем полициллĕ ĕçсем тума пуçланă ĕнтĕ.

Финлянди правительствин «тотальнăй мобилизацийĕ» мĕнле те пулин уса пама пултарать-и-ха? Финсен «Суомен сосиалидемокраатти» хаçачĕ çырнă тăрăх, рабочисен мĕнпур резервĕсем тахçанах пĕтсе çитнĕ ĕнтĕ. «Рабочисене 100 процентчĕпех мобилизацилес тĕлĕшпе эпир тахçанах кирлĕ мерăсем йышăннă, — тесе çырать хаçат. — Рабочисене тотальнăй йĕркепе тахçанах мобилизациленĕ, çак тĕлĕшпе çĕнĕрен мĕн те пулин тума пулĕ-ши вара».

ГИТЛЕР ГЕНЕРАЛĔ МУХТАННИ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Афтонтиднинген» хаçат çапла çырать: Германин генерал-майорĕ Штейнкеллер совет çарĕсене тыткăна парăнни гитлеровецсене питĕ вăтантарнă.

«Темиçе эрне каялла Штейнкеллер хăйне рыцарьсен Тимĕр хĕрес орденне парса награăланă май Берлинра СС-па СА çарĕсен 10.000 салтакĕ умĕнче тата вĕсен тăванĕсем умĕнче сăмах тухса каланă,—тесе çырать хаçат.—Вăл çапла каланă: «Фельдхеренхалле» дивизи вăл «парăннă» тенĕ сăмаха пĕлмест, эпĕ хам тăшмана парăниччен луччĕ перĕнсе вилетĕп», тенĕ».

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ВАШИНГТОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океанри флочĕн командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 12-мĕшĕнче Америка çарĕсем Мариан утравĕсен ушкăнĕнчи Сайпан утравĕнчен 2 миля çурçĕртерехре ларакан Маниагасс утравĕ çине пырса анна. Японецсем хирĕç тăнине часах сирсе янă. Сайпан утравĕ çинче Америка çарĕсем Япони çарĕсен юлашкийĕсене пĕтерсе пыраççĕ.

Сайпан утравĕ çинче японецсен икĕ адмиралĕ пĕтнĕ

ВАШИНГТОН, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Пирл-Харборта Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океанри флочĕн командующийĕн Нимиц адмиралăн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: июлĕн 7-мĕшĕнче Сайпан утравĕ çинче японецсен Лăпкă океанăн вăтаçĕр пайĕнчи флочĕн командующийĕ Нагумо вице-адмирал тата Яно контр-адмирал пĕтнĕ. Нагумо вице-адмирал Японин 1941 çулхи декабрьте Пирл-Харбора атакăланă вăйĕсене ертсе пынă.

ОККУПАЦИЛЕНĔ СОВЕТ ЛАТВИЙĔНЧИ ХАЛĂХА ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ТИСКЕРРĔН ТЫТКАЛАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Афтонтиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, оккупациленĕ Латви ССР-ĕнчи халăха нимĕç оккупанчĕсем тискеррĕн тыткалаççĕ. Юлашки вăхăтра гитлеровецсем çынсене йышлăн арестлеççĕ. Юлашки эрне хушшинче кăна Латвире 2.000 çынна ытла тытса хупнă, тесе çырать хаçат. Вĕсене таçталла илсе кайнă. Тытса хупнисенчен ытларахăшне — вĕсем çарпа ĕç мобилизацийĕсем вăхăтĕнче регистраци пункчĕсене пыман, тесе айăпланă.

Де Голль Алжира таврăннă

АЛЖИР, июлĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Енер каçхине кунта Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Канадăран де Голль генерал таврăннă.

КĔСКЕН

● Неаполь хулинче Муссолинин сывăх сотрудникĕ, шалти ĕçсен министрĕ пулнă фашиста Чезаре Россине арестленĕ, çавăн пекех тата фашистсен Римра ĕçлесе тăнă терророрла организацине ертсе пынă лейтенанта Пьетро Коха арестленĕ, çак организаци вăл гестапо евĕрлĕскер пулнă. Вĕсемсĕр пуçне тата фашистсен вăрттăн ĕçлесе тăнă полицине, «Овра» текенскерне, ертсе пынă çынсене чылайĕшне тытса хупнă. (ТАСС).

● Нумаях пулмасть, Норвеги çыранĕсем патĕнче Англи самолечĕсем тăшман суднисемпе çыранри объектсене тапăннă. Вĕсем çав суднăсемпе объектсене чылай пысăк сиен кÿнĕ. Вăрçă хатĕрĕсем турттаракан икĕ суднăна тата икĕ тральщике бомбăсем тÿрех пырса тивнĕ. Унсăр пуçне тата нефть цистернисемпе пулă çăвĕ хатĕрлекен фабрикăна сиенленĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

А. П. ЧЕХОВ.

Чиновник вилни

Пĕр çав тери илемлĕ каçхине, сăн-сăпат тĕлĕшĕнчен унтан пĕртте кая мар экзекутор*), Иван Дмитрич Червяков, театрта пулнă. Вăл креслăсен иккĕмĕш ретĕнче бинокль витĕр «Корневильские колокола» оперăна пăхса ларнă. Червяков хăйне çав самантра телейĕн çÿлти тÿпине улăхса кайнă пекех туйнă. Анчах сасартăк... Калавсенче çав «анчах сасартăк» тенĕ сăмахсем час-часах тĕл пулаççĕ. Авторсем тĕрĕс калаççĕ: пурнăçра кĕтмен çĕртен пулакан япаласем çав тери нумай! Анчах унăн пичĕ пĕркеленчĕ, куçĕсем путса кĕчĕç, сывлăшĕ чарăнса ларчĕ... вăл биноклĕне куçĕ патĕнчен илчĕ те çĕрелле пĕшкĕнсе... апчхи! терĕ. Хăвăрах куратăр ĕнтĕ, вăл сăмсипе чыхăнчĕ. Сунас килсен, никама та ниçта та ÿсĕрме чармаççĕ. Мужиксем те, полицеймейстерсем те, тепĕр чух тата тайнăй советниксем те апчхи тăваççĕ. Пурте ÿсĕреççĕ. Çавăнпа Червяков пĕртте именмерĕ, тутрине кăларса питне-куçне шăлса илчĕ те, ыр кăмăллă çын пек, йĕри-тавра пăхкаларĕ: ÿсĕрнипе кама та пулин чăрмантармарăм-ши? — терĕ пулас. Анчах унăн çавăнтах вăтанмалла пулчĕ. Вăл хăйĕн умĕнче, креслăсен пĕрремĕш ретĕнче, ларакан старик тимлесех шакла пуçне тата ĕнсине перчеткепе шăлнине курчĕ тата темскер мăкăртатнине илтрĕ. Старикĕ вăл çулйĕр ведомствинче ĕçлекен статски генерал Бризжалов пулнă иккен.

«Эпĕ ун çине пĕрĕхтертĕм! — тесе шухăшларĕ Червяков. — Ман начальник мар ĕнтĕ, ют учреждени пуçлăхĕ, анчах та ырă мар. Каçару ыйтас пулать».

Червяков ахăмлеткелесе илчĕ, кĕлеткипе малалла тайăлчĕ те генерала хăлхинчен пăшăлтатса калама пуçларĕ:

— Каçарăр, ваше-ство, эп сирĕн çине пĕрĕхтертĕм... эп ăнсăртран...

— Юрать-çке ĕнтĕ...

— Тархасшăн каçарăр... Эп вĕт... мĕн... аса та илмен!

— Ах, ларăрсам тархасшăн! Итлеме парăр!

Червяков вăтаннă пек пулчĕ, айванла кулса илчĕ те сцена çинелле пăхма пуçларĕ. Хăй сцена çинелле пăхать, анчах паçăрхи савăнăçа туймасть. Унăн ăшĕ вăркама тытăнать. Антракт вăхăтĕнче вăл Бризжалов патне пырать те, çаврăнкаласа çÿренĕ хыççăн кăшт хăюлланса, мăкăртатма тытăнать:

— Эп сирĕн çине пĕрĕхтертĕм, ваше-ство... Каçарăр...

— Э, юрĕ-çке ĕнтĕ... Эпĕ ун çинчен манса та кайнă ĕнтĕ, эсир çаплах сÿпĕлтетсе çÿретĕр! — терĕ те генерал тутине тарăхуллăн хускатса илчĕ...

«Маннă, тет, а хăйĕн куçĕсенче — тарăху, — тесе шухăшласа илчĕ Червякав, генерал çине вĕчĕрхенуллĕн пăхса. — Калаçасшăн та мар. Манăн ăна инкекĕ ăнсăртран пулнине, эпĕ пĕртте апла шутламаннине ăнлантарса парасчĕ... Вăл сутçанталăк йĕрки хăй çапла та-ха... Атту эпĕ ун çине сурма шухăшланă, тейĕ. Халь каламасан та, кайран та пулин калĕ!..»

Килне таврăнсан, Червяков театрти ĕç çинчен арăмне каласа пачĕ. Ăна арăмĕ çак пулса иртни çине ытла та çăмăлттайлăн пăхнă пек туйăнчĕ, вăл хăрарĕ çеç, унтан, Бризжалов «ют пуçлăх» иккенне пĕлсен, лăпланчĕ.

— Эсĕ çапах та ун патне кайса кил, каçару ыйт, — терĕ вăл. — Ахаллĕн эсĕ хăвна ху халăх çинче тыткалама пĕлместĕн, тейĕ!

— Çапла çав! Ыйтрăм эпĕ каçару, анчах вăл темĕнле... Пĕр ырă сăмах та каламарĕ. Калаçма та вăхăчĕ çукчĕ-ха та ĕнтĕ!

Тепĕр кунне Червяков çĕнĕ виц-мундир тăхăнчĕ, çÿçне касса тикĕслетрĕ те Бризжалов патне ăнлантарса пама тухса кайрĕ... Генералăн приемнăйĕнче лăп туллиех ĕçпе пынă халăх иккен. Унтах Червяков генерала хăйне те курчĕ. Ĕçпе пынисенчен хăшпĕринпе калаçкаласа илнĕ хыççăн, генерал Червяков çине те пăхрĕ.

— Енер «Аркадире», астăватăр пулсан, ваше-ство, — тесе пуçларĕ экзекутор, — эпĕ сăмсапа ÿсĕртĕм те... ăнсăртран сире пĕрĕхтертĕм... Каç...

— Тупнă калаçмалли... Тур пĕлет-и, мĕн сÿпĕлтетсе çÿретĕр эсир! Сире мĕн кирлĕ? — терĕ генерал тепĕр çынтан.

«Калаçасшăн та мар! — тесе шухăшласа илчĕ Червяков, хăранипе кăвакарса кайса. — Çилленет ĕнтĕ... Çук, кăна капла хăварма юрамасть... Эпĕ ăна каласа ăнлантаратăпах...»

Генерал ĕçпе пынă çынсемпе пуринпе те калаçса пĕтерсен шалти пÿлĕмелле утса кайнă чух Червяков ун хыççăн ярса пусрĕ те мăкăртатма тытăнчĕ:

— Ваше-ство! Эпĕ сире, ваше-ство, чăрмантарма хăтăп пулсан, тÿррипех калас пулать, пĕр ÿкĕнĕçлĕ туйăмпа кăна!.. Эпĕ юри мар, хăвăрах пĕлетĕр!

Генерал питне-куçне макăрнă чухнехи пек турĕ те аллине сулчĕ.

— Ара эсир чăннипех мăшкăллатăр-çке, ырă çыннăм! — терĕ вăл алăк хыçĕнче курăнми пулса.

«Аçтан мăшкăллани пултăр-ха кунта? — тесе шухăшларĕ Червяков. — Кунта нимĕнле мăшкăллани те çук! Генерал хăй, а çавна ăнланса илме пултараймасть. Апла пулсан, эпĕ вăл тункатана умĕнче текех каçару ыйтса та çÿреместĕп! Çава тĕпне ăна! Çыру çырса яратăп та—çырлахтăр! Туршăн та текех утмастăп!»

Çапла шухăшласа пычĕ Червяков килнелле утнă чух. Генерал патне вăл çыру çырса ямарĕ. Шухăшларĕ, шухăшларĕ, ниепле те шухăшласа кăлараймарĕ вăл çырăва. Тепĕр кун хăйĕннех каймалла пулчĕ ăнлантарса пама.

— Эпĕ ĕнер сире килсе чăрмантарсаттăм, — мăкăртатма тытăнчĕ вăл, генерал хăй çине ыйтуллăн пăхсан: — эсир каланă пек, мăшкăллама мар. Эпĕ апчхи тунă чух сирпĕтнĕшĕн каçару ыйтма килсеттĕм... куласси е мăшкăласси манăн асра та пулман. Мăшкăллама пултаратăп-и эпĕ? Эпир пуçлăхсене мăшкăллама пуçласан, вара нимĕнле хисеп те... пулмĕ...

— Тасал кунтан! — кăшкăрса пăрахрĕ сасартăк кăвакарса кайнă генерал, чĕтресе.

— Мĕн тетĕр? — терĕ Червяков шăппăн, сехри хăпнипе вилнĕ пек пулса.

— Тасал кунтан!! — терĕ генерал тепĕр хут, урисемпе тапăртатса.

Червяковăн хырăмĕнче темĕскер татăлса анчĕ. Нимĕн те курми, нимĕн те илтмен пулса ларнăскер, вăл алăк патнелле чакса кайрĕ, урама тухрĕ те килнелле сĕнккерĕ... Килне çитсен, вăл, виц-мундирне хывмасăрах, диван çине выртрĕ те... вилсе карĕ.

Хветĕр УЯР куçарнă.

*) Хуçалăх ĕçне тăвакан чиновник.

«Чăваш Коммуни» хаçатăн редакцине чăвашла пичетлеме пĕлекен машинистка кирлĕ. Çак адреспа ыйтмалла: г. Чебоксары, Дом Печати, 3-й этаж, редакция «Чăваш Коммуни».

Чăвашсен аш-какай трестне çакăн пек работниксем кирлĕ: кадрсен отделĕн начальникĕ, секретарь-машинистка, инженер-технологсем, бухгалтерсем, плановиксем, выльăх врачĕ, чĕртавар отделĕн начальникĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Тельмана, 6. Телефон 5—25. 2—1.

Шупашкарти эрех комбинатне уполномоченнăйсем тата районсенче сад çимĕçĕсемпе çырласем хатĕрлекен агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21. Телефон 1-73, один звонок. 6—4

Сăкăр пĕçерекен треста инженер-механик, плановик, нормировщик тата бухгалтер-ревизор кирлĕ. Çак адреспа пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 6-а. 3—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительсен секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—89, промышленноçпа ял хуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин 0—23.

НТ 00262 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59X42 ц 4. Тираж 14.400 экз.